ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ



# ЙĔКĔР ÇУЛЛĂ ПУЛМИН ЮРĔЧЧĔ

Денис ГОРДЕЕВ

Хăлха ыратмаллах кăшкăрса ярас килет. Пурте-пурте илтчĕр. Анчах виле çинче хыттăн калаçмаççĕ.

Эрне кун ирхине килтен тухрăм кăна – пĕве çитеймен виçĕ хĕрача тытса чарчĕ. Эсĕ çавă-и тесе ыйтрĕ пĕри. Çавах терĕм.

– Иван Чермакова пĕлнĕ-и?

– Мĕнле пĕлнĕ-и? Халь те пĕлетĕп.

– Каçхине çакăннă, – терĕ те манпа калаçаканни, виççĕн тан макăрма тытăнчĕç.

Хамăн та куççуль тухрĕ, анчах ăна кăтартас мар терĕм, çаврăнса тăтăм.

Тахçанах хăраса кĕтни çитрĕ иккен тесе шухăшларăм. Паян та çав шухăш пуçран туха пĕлмест. Йĕкĕр çуллă кăна ан пултăрччĕ Иван. Йĕкĕр çуллă çын хăйпе пĕрле вун икĕ çын илсе каймасăр та çырлахмасть теççĕ чăвашсем. Совеçлĕ те талантлă писательсем паян пурте тенĕ пекех хăйсем ку пурнăçра ытлашши çынсем пулнине лайăх пĕлеççĕ. Ивана вăрçмаççĕ, шăпах çапла элчел пÿрнĕ ăна теççĕ.

Вунă çул нишлĕхре, мăшкăлта пурăнса выçça юлнă, çĕтĕке тухнă чăваш писателĕ ку сан çылăху тесе влаç еннелле кăна пÿрне тĕллеме пултарать.

Ура тапса вăрçакансем те сахал мар паян. Православи чиркĕвĕ те кĕлĕ кĕллемест унашкаллисемшĕн. Пĕрре кăна панă пурнăçа пурăнса ирттермелĕх чун хевти çитермеллех пулнă тесе шухăшлатăп эпĕ те. Анчах тĕнчере мĕнле мăшкăл пур, пурне те тÿссе курнă хыççăн малашлăх куç умĕнчех сÿнет çав, эсĕ ху та ку тĕнчене ăнсăртран килнĕ пек туйăнать. Çитменнине, эсĕ хăвăн айăпу ним чухлĕ те çуккине пĕлсех тăратăн.

Чăнах та, мĕн туса айăпа кĕнĕ-ха чăваш писателĕ влаç умĕнче? Приговорсăр-мĕнсĕр айăпларĕç пире. Нимле тивĕçлĕхсĕр тăратса хăварчĕç. Пурлăх тивĕçлĕхĕ пулмасан, ытти тивĕçлĕхсем пирки калаçма та кирлĕ маррине тÿссе курнисем кăна мар, влаç çыннисем хăйсем те питĕ лайăх пĕлеççĕ. Ку таранччен писательсем хăйсем пурнăç тĕп сакайĕнче пурăннине кăтартас мар тесе хăтланаççĕ. Ют çынран кăна мар, хăйсенчен те пытараççĕ çакна, пĕр-пĕрне ултала тăрăшаççĕ. Анчах пăшатана михĕре пытарма çук иккен – ăçта пулсан та, хăçан пулсан та пурпĕрех шăтарса тухать вăл.

Çын правине, çын тивĕçлĕхне нихçан та пĕр чиновник аллине пама юрамасть. Ăна тăвас мар тесе ĕнтĕ патшалăх тытăмне шухăшласа кăларнă. Писатель ĕçĕ мĕн иккенне такамран илтнипе кăна пĕлекен пичет министрĕ чăр-чар алă пуснипе литература журналĕсене гонорар фончĕсĕр тăратса хăварчĕç. Шăп çакăнтан пуçланчĕ те писатель инкекĕ. Виле хÿхи лăпланнă-лăпланман чаплă юбилей паллă тăвар мар-и? Вунă çул çитрĕ чăваш писателĕн аллинчи çăкăр таткине туртса илнĕренпе.

Литература журналĕсем те, издательство та патшалăхăн. Апла пулсан, патшалăхăн йĕрки пулмалла вĕсенче. Иванов-Петров-Сидоров йĕрки мар. Халĕ вара литература журналĕсем – реклама журналĕсем, патшалăх издательстви пĕр çын издательстви пулса тăчĕ. Чиновник хăйне тÿрре кăларма лайăх сăмах шухăшласа тупрĕ: “не востребовано”. Апла мар-çке, хисеплĕ чиновникăм. Мĕнлерех “востребовано”! Чăваш çынни тăван литературăсăр антăхсах çитнĕ. Ĕмĕрхи йăлапа вăл чиновника мар, писателе вăрçать: ма çырмастăн, ма кĕнеке кăлармастăн? Писатель мĕн мăшкăл тÿснине вăл пĕлесшĕн мар. Вулакан писателе яланах турă вырăнне хунă, паян та çаплах шутлать.

Писателĕ вара паян ыйткаласа çÿрет, пуш кĕленче пуçтарать, транспорт чарăнакан вырăнсенче пирус тĕпĕ суйлать. Шупашкарти Пичет çуртне те вăл ал çырăвĕ леçме мар, пÿлĕмсем тăрăх сирĕн пуш кĕленче çук-и тесе ыйтса çÿреме кăна пырать. Мăкăртатма тăрсан, влаç çыннисем ăна каласа ăнлантараççĕ: бюджет чухăн-çке-ха, бюджет чухăн. Чиновник апла калать, хаçатсем вара пач урăхла çыраççĕ. Калăпăр, Патшалăх Канашĕн пуçлăхĕн Лев Кураковăн халăх шкулĕ уçма памалăх та гонорар пур иккен. Ку çитмесен, татах кĕнеке кăларăпăр, татах гонорар илĕпĕр тет пирĕн спикер.

Хаçатранах вуласа пĕлетпĕр. Республика чиновникĕсен пĕр ушкăнĕ Америкăна кайса килнĕ иккен. Ĕçпе-и, ĕççĕр-и – хаçатсем ăна çырмаççĕ. Ыттине хамăрăн чухламалла. Мĕн чухлĕ укçа пĕтнине, ăна ăçтан илнине тĕшмĕртме пÿрмен пире. Татах хаçатран вуласа пĕлетпĕр. Иккен Саранскра ял хуçалăх ĕçченĕсен кунне уявлама чĕннĕ хăнасем пĕр каçра пĕр миллион çурă ĕççе-çисе янă. Пирĕн республикăра та пĕр уява та паллă тумасăр ирттермеççĕ. Вĕсенче мĕн чухлĕ укçа ĕçсе юхтарса кăлараççĕ-ши тесе шухăшлатăн та ăмсанма тытăнатăн. Çав миллион çурă укçана “Ялав” редакцине парсан, мĕн тери аван пулмаллаччĕ те çав тетĕн. Кашни автор листи пуçне миллион ытларах тивет. Ку паян чăваш писательне çырлахтармаллипех çырлахтарнă пулĕччĕ. Чăваш кĕнеке издательстви пĕр автор листишĕн 278 тенкĕ çеç тÿлет пулсан, писательсем хăйсен чи лайăх произведенийĕсене “Ялава” кăна сĕннĕ пулĕччĕç. Лайăх енне пурте туртăнать. Вулакан та. Вăл реклама журналне мар, литература журналне çыранса илесшĕн. Татах аса илтерес килет ытарайми чиновниксене. Чăваш тÿшекне кура ура тăсма хушнă. Халăха чун апачĕсĕр хăварса чаплăран та чаплă уявсем ирттерни, ют çĕршывсем тăрăх каçăрăлса çÿрени, тĕлсĕр те палсăр укçа тăккалани тÿшеке кура ура тăсни мар-çке. Укçа куççăр, хăй ăçта кирлĕреххине вăл курмасть. Пирĕн курса-пĕлсе тăмалла ăна.

Ку ĕç кирлĕ, ку ĕç кирлĕ мар тесе пирĕн çĕршывра нимле саккун та кăларман, кирлисемпе кирлĕ маррисене пĕлсе тăма нимле кантур та уçман. Апла пулсан, президентпа министр ĕçĕ те, гендиректорпа тухтăр ĕçĕ те, çĕр чаваканпа писатель ĕçĕ те кирлĕ этем обществине. Çакăнпа пĕрлех кашни ĕçшĕн ун пĕлтерĕшĕпе сумне кура тÿлемелле. Пурне те, пурне те тÿлеççĕ – писателе кăна тÿлемеççĕ пулсан, ку тĕрĕс маррине судра-мĕнре ăнлантарма кирлĕ те мар. Ку тĕрĕс маррине пурте кураççĕ.

“Химпром” гендиректорĕ уйăхсерен 90 пин тенкĕ ытла ĕç укçи илет пулсан, писателе пичетленнĕ произведенийĕшĕн пĕр пус та памаççĕ пулсан, вырăнлах-ши социаллă политика пирки калаçни?

Вунă çул хушшинче чăваш писателĕн нишлĕхĕ çинчен пурте пĕлсе çитрĕç ĕнтĕ. Хăш-пĕрисем куншăн писательсене хăйсене кăна айăплаççĕ. Ман вĕсене хÿтĕлес килет. Вĕсене тесе чăнчăн писатель пирки калатăп. Чавсапа хире-хире, çынсене тĕртетĕрте ярса “эпĕ писатель” текенсемшĕн кунашкал лару-тăру лайăхрах та. Вĕсемшĕн нимле намăс-симĕс те, нимле чăрмав та çук. Анчах чăн-чăннисем яланах меммешке, хăйсемшĕн тăма пĕлмен, хăй çинчен шутламан çынсем пулнă. Çакă вĕсен таланчĕ пулса тăрать те. Кирек епле пăтăрмах пуçлансан та чи малтан çавсем аманаççĕ. Чикĕнме-çакăнма та çавсем кăна пултараççĕ. Вĕсемшĕн пурнăç мăшкăлĕ çут тĕнчерен те пысăкрах пек туйăнать. Çынлăхран кăларакан мăшкăла тÿсеймесĕр çăка турачĕ пирки шухăшлама тытăннисем классиксен хушшинче те пулнă. Эпир вĕсене пурне те ятран пĕлетпĕр, асрах усратпăр. Вĕсен йышĕнче асран тухми Çеçпĕлĕмĕр те пулнă.

Çапах та талантлă çынсене çăка турачĕ суйлаттарас килмест. Пурăнтарас килет вĕсене. Турă панă ăсталăхĕпе талантне халăхăмăра йăлтах парнелесе хăварма пултарччăр.

Иван Чермаковăн та Турă пани çук марччĕ. Парнелесе хăварайманĕ пире, хăйĕнпе пĕрле илсе кайрĕ.

Иккĕленессĕм çук. Кирлĕ чухне хута кĕрекен пулнă-тăк, вăл та пÿкле шухăшне пăрахнă пулĕччĕ. Никам та, никам та хута кĕмерĕ ăна йывăр чухне.

Сĕтел хушшинче ларнă чухне писателе никам та кирлĕ мар, ал çырăвне вĕçлесенех писатель ĕçĕ общество пурлăхĕ, халăх пуянлăхĕ пулса тăрать. Халăх пуянлăхне саккун хÿтĕлет. Пур вĕсем пирĕн çĕршывра та. 50-60 çул каялла йышăннисем те пăрахăçа тухман, çĕннисем те вăй кĕнĕ. Йĕрки-картипе хурса тухсан, вĕсем пĕр кĕнекене те капашаççĕ. Анчах, паçăрах каларăм, пĕр чиновник чăр-чар алă пусса çавсене пăрахăçлани демократи витĕлĕкĕпе, рынок сарăмĕпе витсен те чи пысăк саккунсăрлăх пулса тăрать. Çав саккунсăрлăх умĕнче писательсем пĕчченшерĕн ним те тăваймаççĕ. Çавăнпа пурнăç вĕсене те пĕр канаша пĕрлешме хистет. Пур писательсен канашĕ: Писательсен союзĕ ятлă вăл. Анчах вăл мĕн туни пурте писательсене хирĕçле кăна пулса пырать. Писатель правине тивĕçлĕхне хÿтĕлес тесе вăл нимĕн те туман. Вунă çул хушшинче те. Халь ĕнтĕ республикăра чи сумлă пултарулăх организацийĕ пулнă, Раççей Федерацийĕнче те сумлисен шутĕнче çÿренĕ Писательсен союзĕ килсĕр-çуртсăр, ятсăр-шывсăр, сумсăр-чыссăр тăрса юлчĕ. Малашне те çаплах пулсан, чăваш писателĕсем хушшинче çăка турачĕ суйлакансем пĕтмĕç.